Лермонтов М.Ю. Пурнăç курки; Пирĕшти; Чул ту; Хумсемпе çынсем: [сăвăсем] / М.Ю. Лермонтов; вырăсларан К.В. Иванов куçарнă // Çамрăк большевик. – 1940. – 29 пуш.

## К. В. ИВАНОВ вырăсларан чăвашла куçарнă сăвăсем



К. В. Иванов çуллă краскăпа ÿкернĕ портрет.

## Пурнăç курки

Пурнăçăн куркинчен
Куçа хупса ĕçетпĕр,
Ылттăн курка хĕррине
Куççульсемпе йĕпетсе.
Вилес вăхăт çитсессĕн,
Куçа уçса пăхсассăн,
Мĕнпур пире илĕртни
Куç умĕнчен çухалать.
Вара эпир куратпăр:
Ылттăн курка пушах мĕн
Шыв вырăнне уй анчах,
Вăл та пулин пирĕн мар!

М. Ю. ЛЕРМОНТОВ çырнинчен
К. В. Иванов куçарнă.




Шурă юр ирĕлет,
Çеçен хир чĕрĕлет,
Ешĕл курăк ÿсет...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хĕвел хытă хĕртет,
Ăшă çил вĕркелет,
Сар ыраш çитĕнет...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хир илемĕ каять,
Сĕм вăрман çаралать,
Пĕрмай çăмăр çăвать...
Вăл хăçан пулать-ши?

Хирсенче юр анчах,
Çырмара пăр анчах,
Сивĕтет аванах...
Вăл хăçан пулать-ши?

## ПИРЁШТИ

Пĕлĕт тăрăх çур-çĕрте
Вĕçсе пынă пирĕшти,
Шăппăн юрă юрласа.
Уйăх, çăлтăр пĕлĕт те
Юрă юрра итленĕ,
Ушкăнĕпе пухăнса.
Вăл рай пахчи хÿттинче
Çылăхсăр чун савăнса
Тăни çинчен юрланă.
Аслă турра — пÿлĕхе
Хăй юрринче асăнса
Чăн кăмăлтан мухтанă.
Асапланма, хурланма
Вăл çамрăк чун çĕр çине
Йăтса пынă аллинче.
Асăнмалăх юлнă çав
Чĕрĕ юррăн сăввисем
Çамрăк чунăн чĕринче.
Ку тĕнчере çамрăк чун
Çÿлти юрă пурнăçшăн
Пăшăрханнă нумайччен.
Анчах пĕлĕт юрри пек
Кунти кичем юрăсем
Ун чĕрине витеймен.

М. Ю. ЛЕРМОНТОВ çырнинчен
К. В. Иванов куçарнă.

## ЧУЛ ТУ

Чул ту айккинче
Ылттăн пĕлĕт çĕр-каçнă.
Ирех ирхине
Вĕçсе, выляса кайнă.
Анчах чул çинче
Нÿрлĕ йĕрĕ палăрать.
Чул ту пĕр пĕччен
Хуллен йĕрет, хурланать.

М. Ю. ЛЕРМОНТОВ çырнинчен
К. В. Иванов куçарнă.



К. В. Иванов çуллă краскăпа ÿкернĕ портрет.

## Хумсемпе çынсем

Сивĕ хумсем юхаççĕ,
Ушкăн-ушкăн чупаççĕ
Çатăлтатса, шавласа;
Çаплах çынсем килеççĕ,
Кĕтĕвĕпе иртеççĕ,
Хумсем пекех черетпе.
Ирĕк хаклă хумсемшĕн,
Сивĕ хаклă вĕсемшĕн
Пуринчен те ытларах;
Ăшă чунлă пуласшăн
Çынсем... анчах пăхсассăн —
Чунĕ хумран сивĕрех.

М. Ю. ЛЕРМОНТОВ çырнинчен
К. В. Иванов куçарнă.